Килти хушма хуçалăх

«Ял çыннишĕн меллĕрех пултăр тетпĕр»

Çапла пĕлтерчĕ хамăрăн калаçу пуçламăшĕнче Юнкă ял тăрăхĕн территорийĕнчи ял хуçалăх продукчĕсене вырнаçтарас тата тирпейлес енĕпе ĕçлекен «Росагро» кооператив ертӳçи Николай Михайлович ЯДЫКОВ. Кооператива йĕркелени икĕ çул кăна пулин те, малтанхи ӳсĕмсем çук мар ĕнтĕ. Унăн уссине ял çыннисем те туйса илме ĕлкĕрнĕ. Кооператив ĕçĕ-хĕлĕ пирки хаваспах каласа пама килĕшрĕ Николай Михайлович.

– Ăçтан çуралчĕ-ха кооператив йĕркелес шухăш?

– Вăрттăнлăх мар ĕнтĕ, юлашки вăхăтра чылай çĕрте пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем ункченхи пек ĕçлесе пыраймаççĕ. Хăшĕсем саланса каяс патнех çитнĕ. Ял çыннин вара ăçта кайса кĕмелле, мĕн ĕçлесе укçа тумалла? Кӳршĕ регионсене пурте ĕçлеме тухса çӳреймест. Пĕртен-пĕр шанчăк килти хушма хуçалăх çинче кăна. Пахча çимĕçне те, тымар çимĕçне те, çĕр улмине те, улми-çырлине те килтех ӳстерме пулать, выльăхне усрасан аш-пăшĕ те, сĕчĕ те çемье членĕсем валли çеç мар, сутмалăх та пухăнать.

Кунта каллех ыйту тухса тăратчĕ – продукцие вырнаçтарасси. Шăпах çакна тĕпе хурса йĕркелес терĕмĕр те кооператива. Пирĕн тĕп тĕллев шăпах ĕнтĕ ял çыннисемшĕн меллĕ майпа вĕсен хушма хуçалăхĕнчи ӳсен-тăран тата выльăх-чĕрлĕх продукцине вырнаçтарас парасси пулса тăрать.

– Сирĕншĕн çĕнĕлĕхпе çыхăннă ĕç пулмарĕ-и çакă?

– Апла та калама пулать. Унччен эпĕ шкул системинче ĕçленĕ. Вĕренессе вара агронома вĕренсе тухнă.

– Николай Михайлович, кирек епле япалана та пуш вырăнта йĕркелеме çук пулĕ. Малтанхи капитал, ĕçре пулăшакансем пирки мĕн калама пултаратăр?

– Ку чăнах çапла. Çăмăл пулчĕ тесе каламастăп. Пулăшакансем те пулмарĕç мар. Чи малтанах Юнкă ял тăрăхĕн пуçлăхне С.В. Ермакова, хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕн членĕсене ырăпа палăртса хăварнă пулăттăм. Кооператива кĕрекенсем малтанхи вăхăтра хăйсен укçи-тенкине хыврĕç. Паянхи куна вĕсем 83 çын. Продукци турттарма «Газель» автомашина арендăна илтĕмĕр, кунсăр пуçне хушма хуçалăха аталантарма уйăракан çăмăллатнă кредитпа груз турттармалли УАЗ атомашина туянтăмăр.

– Кооператив йĕркелени çынсене ĕçпе тивĕçтерес, ĕç тупса парас енĕпе те усă кӳрет ĕнтĕ.

– Кооперативра штатра 7 çын шутланать. Бухгалтер та, кассир та, сутуçă та пур. Ĕç килĕшĕвĕпе ĕçлетпĕр. Кунсăр пуçне ялти лаша усракан çынсене те кооператив ĕçне явăçтарма май килчĕ. Акă пур урама та хĕллехи е пылчăк вăхăтĕнче кĕрсе тухма май çук. Çынсен хăйсен те куллен сахал мар утма тивет. Çавăнпа та продукцие халĕ вĕсем кун пек урамсенчен лашапа илсе тухаççĕ. Геннадий Егоров, Светлана Данилова, Михаил Чернов хăйсен çак тивĕçне йĕркеллĕ пурнăçлаççĕ.

– Ял çыннисенчен пухакан сĕте вырнаçтарассипе çеç ĕçлетĕр-и?

– Эпир вырнаçтарса паракан тĕп продукци сĕт пулса тăрать пулин те, ытти енĕпе те ĕçлетпĕр. Акă ял çыннисенчен аш-пăш, çĕр улми, купăста, кишĕр, кăшман та пухатпăр, вĕсене меллĕ майпа сутсавырнаçтарса паратпăр. Продукцишĕн укçан тӳлетпĕр. Кунсăр пуçне ял çыннисене тĕрлĕ тавар, продукци илсе килсе парассине те йĕркелерĕмĕр. Юлашки вăхăтра выльăхсем валли пирĕн урлă тырă, хывăх, удобренисем, пурă, тăвар илсе килекенсем йышлă. Хушма хуçалăх валли ӳсен-тăран вăррисене те кӳрсе паратпăр.

– Сирĕн суту-илӳ точки те пур-им?

– Çапла, Шупашкарта «Северный» пасарта ятарлă суту-илӳ павильонĕ пур. Унта хамăр патри ял çыннисен продукцине сутатпăр. Ку енĕпе Шупашкар хула администрацийĕ пулăшрĕ. Çавна та каласа хăварасшăн. Хула çыннисем пирĕн продукцие хапăл тусах туянаççĕ. Пахалăхĕ те, хакĕ те тивĕçтереççĕ. Ку тата акă мĕнпе çыхăннă. Пирĕн ял тăрăхĕнчи ялсем тĕп автомобиль трассинчен аяккарах вырнаçнă, таврара вăрмансем пур. Çавăнпа та кунта туса илнĕ продукцисем те тасарах.

– Хăвăрăн чи активлă кооператив членĕсене асăнса хăварсамăр.

– Кашни ялтах пур вĕсем. Хăшĕсем килти хуçалăхра 2–3-шер ĕне тытакансем те пур. Продукци хатĕрлесе парассипе вара Пĕрремĕш Май выçăлккинчи Олег Аргандеева, Ольга Ястребована, Юнкăпуçĕнчи Юрий Яндушкина, Кăпасри Юрий Терентьева, Вячеслав Лаптева, Лидия Терентьевана, Галина Иванована, Юнкăри Николай Романова, Валерий Романова, Явăльняри Анна Салдакеевана тата ыттисене ырă енчен палăртнă пулăттăм.

– Малашнехи ĕçсем, ĕмĕттĕллевсем пирки мĕн калас тетĕр?

– Тĕллевсем пĕчĕк мар. Хальхи вăхăтра пачах усă курман е кирлĕ пек усă курман çĕр лаптăкĕсем çук мар. Вĕсем çинче тырă-пулă акса ӳстерни усăллăрах ĕнтĕ. Çавна май малашне эпир çĕр ĕçĕпе те ĕçлеме тытăнасшăн. Кунта вара кредит илме май пулсан питех те аван пулмалла. Анчах та çавна валли салука хывмалли пурлăх çукки чăрмав кӳрет. Кооператив членĕсен çĕр пайĕсене салука хывма пулĕччĕ ĕнтĕ. Шел пулин те, çĕр пайĕсене виçтерме, регистраци палатинче регистрацилеме сахал мар укçа тӳлемелле пирки чылайăшĕ çак ĕçе туса ирттереймест. Хăйсен çĕр пайĕсене кооператив аллине шанса парсан вара вĕсем уншăн дивиденд шучĕпе тыррине те, улăмне те илсе тăрĕччĕç.

Пĕр сăмахпа, ĕçлемелли сахал мар. Апла пулин те хамăр шухăшсене пурнăçа кĕртсе пымах тăрăшăпăр. Малтанхи утăмсем ывăртарах пулаççĕ. Умри йывăрлăхсене пĕрлехи вăйпа татса пама пулатех тесе шутлатăп.

В. ШАПОШНИКОВ
каласнă.

Конкурс

Н.В. Никольские халласа

Кăçал май уйăхĕн 19-мĕшĕнче пирĕн паллă ентешĕмĕр, чăвашсен пĕрремĕш профессорĕ, «Хыпар» хаçата йĕркелесе яраканĕ Н.В. Никольский çуралнăранпа 130 çул çитет.

Çак ятпа Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи Н.В. Никольский музейĕн ĕçченĕсем районти шкул ачисене викторинăна хутшăнма ыйтаççĕ.

Викторинăна хутшăнакансен хуравсене çак адреспа ярса памалла:

Муркаш районĕ, Ваçкасси ялĕ, Ленин урамĕ, 1 «в» çурт, Н.В. Никольский музейĕ. «Паллă ентешĕмĕре халалласа» викторина.

Викторинăна хутшăнакансен хуравĕсене ака уйăхĕн 30-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Хăвăр хăш ялта пурăннине, мĕнле шкулта вĕреннине, класне тата хушаматăра, ятăра çырса яма ан манăр!

1,2,3-мĕш вырăн йышăннисене дипломсемпе сумлă парнесем кĕтеççĕ. Хуравсене туллинрех çырса парсан аван пулмалла. Палăрнă ачасене çу уйăхĕн 19-мĕшĕнче Н.В. Никольские халалланă пысăк уявра Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрĕнче чысласаççĕ.

Викторина ыйтăвĕсем:

1. Н.В. Никольский ашшĕ тата амăшĕ мĕн ятлă, камсем пулнă вĕсем?
2. Н.В. Никольский Иван Яковлевичран миçе çул кĕçĕн?
3. Миçе ачаллă çемьере ӳснĕ пирĕн паллă ентешĕмĕр Н.В. Никольский?
4. Н.В. Никольский «Хыпар» хаçата хăçан йĕркелесе янă?
5. Хусан кĕпĕрнин земство председателĕ пулма Никольские хăш çулта суйланă?
6. Миçе аслă пĕлӳ илнĕ Н.В. Никольский?
7. Кӳршĕри Мари Республикинче кам пулса ĕçленĕ пирĕн ентеш?
8. Н.В. Никольский тĕрлĕ музыка хатĕрĕсемпе выляннă, хăшĕ вĕсенчен унăн юратнă музыка инструменчĕ пулнă?
9. СССР Вĕрентӳ министерстви Н.В. Никольские хăш çулта истори наукисен докторĕ ят панă?
10. Н.В. Никольский «Юмахсем» кĕнекене миçемĕш çулта пичетлесе кăларнă?

Шкулсенчен хыпарлаççĕ

Ырă çынна пĕтĕм тĕнче тăван



Çак ваттисен сăмахĕ Чуманкасси шкул ачисем пиркиех пулĕ тетĕп. Мĕншĕн тесен мĕн пур чĕрĕ чун пирĕншĕн ют мар, вĕсем – пирĕн туссем.

Хаçатăн малтанхи номерĕсенче Чуманкасси шкул ачисем Шупашкарти ача çурчĕ валли теттесемпе шоколодсем пухни пирки, кайăксене сырăшсемпе савăнтарни çинчен пĕлтернĕччĕ эпир. Ырă ĕçсен марафонне çакăнпа çеç вĕçлемерĕç шкул ачисем.

Вĕренӳ шкул ачишĕн пĕрремĕш вырăнта. Çакна шута илсе ĕнтĕ Чуманкасси шкул ачисен парламенчĕ «Тетрадьсемпе кăранташсем – ача çурчĕ валли» акци йĕркелерĕ. Ыр кăмăллăх акцине пур вĕренекен те, учитель те активлă хутшăнчĕ. Пуçламăш классем те хăйсен тантăшĕсем валли пластилин, сăрă, кăранташсемпе ручкăсем, илемлĕ тетрадьсем илсе килчĕç. Аттепе аннесĕр пурăнма çăмăл маррине мĕн пĕчĕкренех ăнланаççĕ вĕсем.

Чуманкасси шкулĕ çыхăну тытакан ача çуртĕнче пурĕ 85 ача. Çуркуннехи каникулта эпир вĕсем патне кайса килме тĕв тăватпăр. Тĕл пулу мĕнле иртни çинчен çырса пĕлтерĕпĕр.

Çунатлă туссем çинчен те манмастпăр эпир. Шăнкăрчсене кĕтсе илме хатĕрлентĕмĕр, вĕсем валли вĕллесем турăмăр. Çак ĕçре А. Егорова (5 кл.), В. Прокопьева (5 кл.), А. Семенов (6 кл.), Д. Прокопьев (7 кл.), И. Семенова (7 кл.) маттур пулчĕç. «Атте пулăшмасăр йывăртарах пулнă пулĕччĕ», – терĕç Иринăпа Саша Семеновсем. Вĕсен ашшĕне, ялти ал ăстине, пурте палласаççĕ ĕнтĕ. Вероникăпа Дима Прокопьевсем вара шăнкăрч вĕллисене хăйсемех ăсталама пултарнă. «Ырă туни нихăçан та çухалмасть», – теççĕ вĕсем ваттисен сăмахне аса илсе.

Эсир те, туссем, пуринпе те туслă пулăр. Вăй çитернĕ таран тавралăха пулăшăр.

Оля ПАВЛОВА.

Чуманкасси шкулĕ.

Сĕт ыйтăвĕ пиркиех

Ял çыннин мĕнле чăтмалла-ши?

Ял пурнăçĕ. Мĕнпе уйрăлса тăрать-ха вăл паянхи кун? Эпир пирĕн пурнăç улшăнса, çĕнелсе, лайăхланса пырать тенине кашни кунах илтме хăнăхса çитрĕмĕр ĕнтĕ. Лайăх улшăнусем çук тесе каласшăн мар эпĕ. Паллах, ялсенче газпа усă курма тытăнни те, çĕнĕрен те çĕнĕ урамсене шыв пăрăхĕсем хуни те, ялсем патне çулсем туни те ял çыннисен пурнăçне лайăхлатать. Анчах та газпа ăшăнса, шыв ĕçсе асфальт сарнă çул тăрăх шаклаттарса утнипех тутă пулаймăн.

Эпĕ хамăн ачалăх кунĕсене аса илетĕп те ăна паянхи ял пурнăçĕпе ниепле те танлаштарма май çук. Ялти ватăсем ун чухне нимĕнле пенси укçи те илместчĕç. Тен савăнпа та пулĕ ури утма пултарнисем вара хĕрӳ ĕç çи вăхăтĕнче ӳй-хирте, улăхсенче вăй хуратчĕç. Пирĕн пĕчĕк ялтан кăна ĕçлеме 40–50 çын таран тухатчĕ. Еплерех ĕç вĕресе тăратчĕ ун чухне!

Халĕ вара ĕçлеме тухаканни 4 çын та çук. Юрать-ха выльăх-чĕрлĕх ускалаласа тупăш илес тесе тăрмашаççĕ хăшĕсем. Юлашки çулсенче ял çыннисем ĕнесем усраса сĕт сутса тупăш илес тесе ĕçлеме хăнăхса пычĕç. Чылай çемьесен сĕтрен илекен тупăшпах çырлахкаласа пурăнма тивет.

Бизнесмен, предприниматель тени те халĕ пирĕншĕн çĕнĕлĕх мар ĕнтĕ. Анчах та çак предпринимательсенчен ытларахăшĕ суту-илӳпе кăна аппаланать. Вĕсем хăйсем аллипе нимĕнле продукци туса кăларса та патшалăха пуянлатмаççĕ. Сутакан таварсене илес пулсан та ытларахăшĕ пирĕн патшалăхра туса кăларнисем мар. Промышленность туса кăларнă таварсене кăна мар, апат-çимĕç таварĕсене те ют çĕршывсенчен, чикĕ леш енчен кӳрсе килеççĕ. Çулран-çул вĕсен тӳпи ӳссе пырать кăна. Çакăнпа пĕрлех таварсен хакĕсем те хакланса кăна пыраççĕ. Пире вара инфляци тесе ăнлантараççĕ. Газпа, электроэнергипе усă курассин, сĕрмелли тата çунтармалли хатĕрсен хакĕсем вĕçĕм ӳссе пыраççĕ.

Шутласа пăхатăн та, пирĕн пурнăçра нимĕн те йӳнелмест иккен. Халăхран пуçтаракан сĕт хакĕ вара çулсерен «вылять». Малтанхи пурнăçра пĕр литр сĕт сутсан 3–4 литр бензин илме пулатчĕ. Сĕтĕн хакĕ те, бензин хакĕ те улшăнмасăр пĕр шайрах тăратчĕç. Халĕ вара магазинсенчи сĕт анчах хăйĕн хакне çухатмасть. Паянхи кун ăна халăхран пĕр литрне 7 тенкĕпе пуçтараççĕ пулин те, магазинсенче унăн хакĕ 3–4 хут пысăкрах. Çакă вăл ял çыннисенчен кулни пулмасть-и-ха?

Ял хуçалăх предприятийĕсенче сумалли ĕнесен шучĕ чакса пырать. Ялта пурăнакансем хăйсен паянхи çити-çитми пурнăçне кăшт та пулин лайăхлатас тесе ĕне-выльăх усрама тапаланаççĕ. Аран-аран çӳрекен ватă кинемейсем те ĕнесĕр пурăнасшăн мар. Шел пулин те, выльăх усраса ырă ĕç тăвакан çак ĕçченсен интересĕсене паян никам та хӳтĕлемест. Раççейĕн çĕр айĕнчи пурлăхне, Турă панă ырлăха сутса пуякансен вара нимĕн те йӳнелмест. Алăпа тумламăн суса кăларакан сĕт хакĕ кăна ниме те тăмасть. Ял ĕçченĕсен кăмăлне çакăн пек пăснине ниепле те ырлама май çук.

Ĕнен сĕчĕ чĕлхи çинче, тенĕ. Паян вара выльăх апачĕ хакланса пыни те вăрттăнлăх мар. Тĕш тырă, комбикорм е хывăх хакĕсем çӳлтен-çӳле хăпарни те сĕтĕн хакне чакарнипе нимĕнле те килĕшсе тăмасть.

Анчах сăлтавĕ мĕнре-ха? Нивушлĕ эпир паянхи кун малтанхи вăхăтринчен ытларах сĕт сăватпăр? Çук! Тĕп сăлтавĕ вара пирĕн халăха ют çĕршывсенчен кӳрсе килекен порошоклă сĕтпе тăрантарнинче. Çак порошока шывпа пăтратса, тутлăлантаракан япаласем хушса «сĕт» тесе сутаççĕ. Уйрăмах пысăк хуласенче пурăнакан çынсен ытларах çак «сĕте» çиме-ĕçме тивет. Хамăрăн сĕт вара ниме тăман япала пулса юлать. Йӳнелнĕ сĕте эпир ытларах та ытларах, хăшĕсем хăйсем çимесĕр сутса укçа тума тăрăшатпăр.

Ют çĕршывсенче фермерсенчен çапла мăшкăлланă пулсан, вĕсем сĕте сутас вырăнне сыснасене çитернĕ пулĕччĕç. Ахальтен мар ĕнтĕ Америкăри е Канадăри фермерсем хăй вăхăтĕнче тĕш тырă хакне йӳнетес мар тесе тинĕсе кайса тăкни те пулман мар.

Эпир хальхи вăхăтра электроника, нанотехнологи аталаннă тапхăрта пурăнатпăр тетпĕр. Пирĕн алăра компьютерсем, Интернет... Анчах, апла пулин те, ĕлĕкхи технологипе ĕçлесе пырассине пĕтереймеспĕр. Сĕт-çу завочĕсенче те компьютерсем лартса тултарнисĕр пуçне çĕнĕлĕхсем тума васкамаççĕ. Вĕсен мĕншĕн-ха технологи çĕнĕлĕхĕсемшĕн тăрăшмалла? Халăхран йӳнĕ сĕт пуçтарсах кĕсье тулли укçа тума май пур вĕтха. Мĕншĕн-ха сĕт нумай чухне ăна пирĕн патра та порошок туса хума пулмасть? Е пирĕн сĕт порошок тума юрăхсăр?

Халăх хушшинче пулнă чухне час-часах çакăн пек каланине илтме тӳр килет: «Мĕн усси 2-3 ĕне усранинчен, йăлтах хаклă, улăм та тупса илме йывăрланчĕ». Е тата: «Хамăр валли пĕр ĕне усрасан та çитĕ»,– теççĕ. Укçаллăраххисем вара: «Сĕте укçалла туянни йӳнĕрех ларать»,– текенсем те пур.

Паянхи пек пурăнса, ял çыннисен интересĕсене шута илсе тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳсем тумасăр пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи выльăхсен шутне чакарса янă пек ялсенчи ĕне выльăхсене те çухатас марччĕ пирĕн. Сĕт-çу завочĕсен ертӳçисен те малашлăха курса пурнăçран юлас марччĕ. Сĕт продукцине туса хатĕрлекенсен те пурăнасас пулать вĕт-ха.

П. ВОРОБЬЕВ,
депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ.

Пирĕнпе юнашарах вĕсем

Укçашăн мар, чун туртнипе

Тĕрлĕрен пулать пурнăçра. Хăшĕсем хăйсен ашшĕ кам пулнине те пĕлмеççĕ. Хама эпĕ ку енĕпе ӳпкелеместĕп. Пурнăç тăршшĕпех эпĕ телейлĕ пулнă. Мĕншĕн тесен мана атте питĕ юратнă. Хăшĕсем вара ăмсанатчĕç те мана. Паллă ĕнтĕ, эпĕ те унпа мухтанаттăм, хăпартланаттăм. Апла пулин те шăллĕпе пиччĕшне – Сашăпа Сергей Верендеевсене – хам ăмсанмасăр пултарайман. Эпĕ пĕччен анчах та мар пулĕ. Мĕншĕн тесен Василий Алексеевич пек çынсем таврара нумаях мар тесе шутлатăп. Калăпăр, манăн аттен лайăх енĕсемпе пĕрлех çитменлĕхсем те çук марччĕ, çав вăхăтрах Василий Алексеевичăн вĕсем чăннипех те пачах та çук. Ăна пулах ĕнтĕ манăн атте халĕ те пур. Вăл мана халĕ те пулăшса тăнине епле хакламаллине те пĕлместĕп. Ăна пăхсан, ăна итлесен, оптимизм туйăмĕпе пуянланатăн, çак пурнăçра хальлĕхе пĕтĕмпех çухалман-ха тесе ĕненетĕн.

Паянхи кун та вăл пачах тӳлевсĕр ĕçлеме вăй-хал çитерет. Перлов фончĕ çумĕнче 20 ача валли шахматла выляканскен кружокне ертсе пырать. Пĕринчен те пĕр пус та укçа илмест. Ачасем те унăн пултарулăхĕнчен тĕлĕнеççĕ. Вĕсен ашшĕ-амăшĕсенчен хăшĕсем тăван хуçалăхрах ĕçсĕр тăрса юлнă вĕтха, ытлашши укçа никамăн та çук.

Пысăк тав сăмахĕ калас килет манăн сире, хаклă учитель, хăвăрăн ăшă кăмăлшăн, ырă кăмăллăхшăн. Çакăн пек пархатарлă та ырă ĕçсем Ырă ĕçсен çулталăкĕнче татах та нумай пуласса шанас килет.

Т. ПЕРЛОВА,
Перлов фончĕн председателĕ.

Вăрманкасси ялĕ.

Вулакан пултарулăхĕ

Эс çутатрăн, савни, ăшăтмарăн

Сад пахчи ешĕл тум тăхăнсассăн,
Кĕмĕлне тулли уйăх сапсан,
Ţуйăнать тек мана эс тухассăн
Ĕлĕкхи вырăна каç пулсан.
Таврана шурă юр шуратсассăн,
Çăлтăрсем тӳпере ялкăшсан,
Ţуйăнать тек мана эс тухассăн
Ĕлĕкхи вырăна каç пулсан.
Ак каллех шурă тумлă пахчийĕ,
Тулли уйăх шăвать тӳпере,
Миçĕ ак пан улмийĕ, çырлийĕ –
Сана çеç манаймасть ман чĕре.
Эс çутатрăн, савни, ăшăтмарăн,
Кунран-кун çунтăм эп пурпĕрех.
Кăварланчĕ иккен, эс туймарăн,
Юрату вутĕнче ман чĕре.

П. ВОРОБЬЕВ.